# БИБЛИОТЕКĂРА

*Очерк*

***Хветĕр УЯР***

Шупашкар хулинчи Кинотеатр тĕлĕнчен сулахаялла пăрăнса тăвалла хăпаратпăр. Сылтăм енче пуртан касса тунă пек куранакан илемлĕ шурă çурт. Ун умĕнчи тротуар хĕррине пĕр рет каврăç йывăççи лартса тухнă. Тăррисене пĕчĕккĕ чух касса тикĕслесех тăнипе, вĕсем халĕ пурте пĕр пек.

Ку çуртран иртен пуçласа каçченех халăх таталмасть. Рабочисем, служащисем, аслă шкулсемпе вăтам шкулсенче вĕренекенсем, научнăй работниксемпе колхозниксем, стариксемпе çамрăк ачасем. Пĕрисем вĕсенчен халь кăна пуранма тытăннă-ха. Теприсем аслă вăрçăпа аслă стройкăра пулса е вăйлă тырпул туса илнипе чапа тухнă, вĕсенчен пурнăçра хурапа шурра курнисем те чылай. Кусем вулакансем. Çурчĕ—Чăваш республикинчи А. М. Горький ячĕпе тăракан библиотека.

Аялти хутра кĕнекесем упрамалли пӳлĕмсем, канцеляри, киле кĕнеке парса яракан уйрăм.

Эрешлесе пĕтернĕ тимĕр пусма тăрăх çӳлти хута хăпаратпăр. Коридор. Чӳрече патĕнче—В. И. Ленин çинчен çырнă кĕнекесен выставки. Витрина ăшĕнче А. С. Пушкин произведенийĕсем. Коридор тăршшĕпех алăксем. Пĕрремĕш пӳлĕмре хранилище... Иккĕмĕш пӳлĕм алăкĕ умĕнче кĕнеке улаштаракансем кĕпĕрленсе тăраççĕ. Юнашар алăк научнăй работниксем ĕçлекен зала илсе кĕрет. Ыттисенче—вуламалли залсем.

Çамрăксем Атăл енчи балконсем çине тухса ларнă. Вĕсем экзаменсем пама хатĕрленеççĕ е иккĕнвиççĕн пуçтарăнса шăппăн пĕр-пĕр кĕнеке çинчен калаçаççĕ.

Пӳлĕмсем таса, çутă. Сĕтелсем, хыçлă пукансем, диван. Стена çинче çулпуççен сăнĕсемпе пĕрлех писательсен сăн-ӳкерчĕкĕсем, плакатсем çакăнса тăраççĕ. Ку ӳкерчĕксем патне çитсе тăрсан, библиотека заведующийĕ библиотекăн патша вăхăтĕнчи кун-çулĕ çинчен каласа парĕ.

1897 çулта Шупашкар библиотекине кĕпĕрне пуçлăхĕн представителĕ кĕрсе тухнă пулнă. Хусана таврăнсан, вăл шĕкĕр хулана çакăн пек хут çырса ярать:

*„Шупашкар хулинчи обществăллă библиотекăна.*

Библиотекăн стенисем çине патша портречĕсемпе юнашар вырăс писателĕсен портречĕсене вырнаçтарни килĕшӳллĕ мар тесе шутласа, вĕсене хăлех, пĕр тăхтаса тăмасăрах, илсе пăрахма хушатăп. Вĕсене илсе пăрахни çинчен мана пĕлтерĕр.

*Хусан кĕпĕрнинчи библиотекăсен заведующийĕ, губернатор çумĕнчи уйрăм порученисен аслă чиновникĕ (алă пуснă)*".

Революциччен Шупашкар библиотеки хулари хăрсăр çынсен вăйĕпе кăна тытăнса тăнă. Пĕрисем ăна вăй çитнĕ таран укçа-тенкĕпе, теприсем кĕнекесем пуçтарса парса пулăшнă.

Пуçлăхсем вара библиотека ĕçне аякран сăнаса тăнă. Вăхăтран вăхăта пырса тĕрĕслесе библиотекăри „усал шухăшлă кĕнекесене" илсе кайса çунтарнă, кăмăла кайман библиотекарьсене вырăнтан кăлара-кăлара янă.

Отчĕтсем-мĕнсем çырнă чухне вара çак ĕçсене йăлтах „Хура халăха çутта кăларас ĕçе ертсе пыни" текен графара паларгнă. Октябрьти социализмлă Аслă революциччен 900 ята яхăн чăвашла кĕнеке пичетленсе тухнă пулнă. Вĕсене Хусанта, Чĕмпĕрте, Ĕпхӳре пичетлесе кăларнă. Анчах вăл кĕнекесенчен пĕри те Шупашкар библиотекине çитеймен. Хула хуçисен библиотека валли чăвашла кĕнекесем илме „укçа çитмен".

Октябрьти революци хыççăн тин Шупашкар библиотеки хулапа пĕрлех ӳсме тытăнать. Тĕттĕм те чĕрĕ подвалтан пысăк та çутă çурта куçать. Чăваш республики 10 çул тултарнă тĕлелле библиотекăри кĕнекесен хисепĕ 30 пинтен иртсе каять. Паянхи кун А. М. Горький ячĕпе тăракан библиотекăра 130 пине яхăн кĕнеке. Вĕсенчен 8 пинĕ чăвашлисем. 1948 çулта кăна библиотека 18 тĕрлĕ хаçат, 143 тĕрлĕ журнал илсе тăнă. 143 журнал! Шупашкар хулинче пурăнакан çынсем кăна мар, Чăваш республикинчи пур тĕрлĕ профессиллĕ çынсем те унта хăйсене кирлĕ журнал тупса вулама пултараççĕ.

Библиотекарь çынсене учительсемпе пĕр танах ӳсме, вĕренме пулăшать. Анчах учитель ачасене вĕрентсе кăларать те е аслăрах классене е урăх шкула ăсатать. Питĕ нумай пурăнсан, вăл ачасемпе 4—5 çул пурăнать. Библиотекарь хăйĕн вулаканĕсемпе нихăçан та уйрăлмасть.

Киле кĕнекесем парса яракан пӳлĕме ик-виçĕ çын пырса кĕрет. Темиçе самант маларах вĕсем, кăмăн малтан кĕмелле, тесе алăк умĕнче кĕпĕрленсе тăнăччĕ. Халĕ вĕсем кĕнеке шкапĕсем çине пăхаççĕ. „Неушлĕ вĕсене пурне те кам та пулин вуласа тухнă?" теççĕ вĕсен куçĕсем.

— Эсир кĕнеке илме-и?

— Кĕнеке илес тесе килтĕмĕр...



**Чăваш республикинчи А. М. Горький ячĕпе тăракан библиотека çурчĕ.**

*Г. Зиньков фото-ӳкерчĕкĕ.*

— Çырăнас тетĕр-и?—Библиотекарь вĕсем çине пĕрре пăхсах çĕнĕ вулакансем иккенне палласа илет.

— Çырăнас тетпĕр çав...

— Эсĕ ăçта ĕçлетĕн?

— Стройтреста каскалама кĕтĕм.

— Эсĕ тата?

— Эпĕ заводра чернорабочире ĕçлетĕп.

— Мĕн вулас тетĕр?

— Тупса парăр мĕн те пулин. Хăвăр пĕлсе парăр.

Ку сăмахсене яланах тенĕ пек библиотекăна пĕрремĕш хут пынă çын калать. Вăл библиотекаре шанать. Библиотекарь унпа тахçан палласа пурăннă пек калаçать, çав хушăра вăл çын мĕнпе интересленнине, унăн шухăш-кăмăлĕ ăçталла туртăннине пĕлет. Кĕнеке илме пынă çын сад ăстаçи аллинчи çамрăк хунава аса илтерет. Çак хунава лайăх, хăй юратакан тăпра çине лартсан, пĕлсе пăхсан, вăл пĕчĕк хунавранах пысăк йывăç пулса кайма пултарать. Пăхма пĕлмесен, вăхăтра шăвармасан, çийĕнчех хăрса ларать. Библиотекарь çакăн пек вулакана „хăйне тупма“ пулăшать. „Хăвăр пĕлсе парăр“ текен çын вара кĕçех хăйне кирлĕ кĕнекесене хăй суйласа илме тытăнать. Пĕрер уйăхран е иккĕрен ăна библиотекăра кăна мар, производствăра та асăрхаççĕ. Халиччен нимĕнпе те уйăрălса тăман çын тăрăшса ĕçлеме тытăнать, хăйĕн ăсталăхне ўстерет, пухусенче тухса калаçать, обществăлла пурнăçа активлăн хутшăнать. Унăн малашнехи кун-çулĕ те паллă ĕнтĕ: стахахановец, бригадир, маçтăр, аслă шкул...

Сĕтел-пукан тăвакан А. Н. Косолапов кĕнекекене юратма хăнăхса çитсен, ĕçленĕ хушăрах вăтам шкул пĕтерме ĕлкĕрнĕ. Халĕ вăл Шупашкарти педагогика институтĕнче вĕренет; И. Д. Дмитриев аслă шкул пĕтерсе тухнă, диссертаци çырса ученăй ятне илнĕ. Библиотекарьсем шута илнĕ çакăн пек çынсен хушамачĕсене кăна çырас пулсан та пĕр тетрадь кирлĕ, мĕншĕн тесен библиотекăран кĕнеке илме тытăннă пилĕк çынтан е иккĕшĕ е виççĕшĕ часах каçхи шкулсене, курссене, институтсене вĕренме кĕрсе, аслă çул çине тухаççĕ.

Вĕренсе тухсан, вĕсем каллех библиотекăна пыраççĕ. Библиотекарь вĕсемшĕн çаплах канаш паракан, ĕçре пулăшса пыракан çын...

— Çынсем куç умĕнчех ўссе пынине курсан чун савăнать,— тет библиотекăра 25 çул хушши ĕçлекен Е. Т. Исаакова, çак ĕçе пурнăçри пур тĕрлĕ профессисенчен те мала хунă çын.—Малтан ўкерчĕклĕ кĕнекесем ыйтаççĕ. Пĕрер çул кăна иртсе каять, çын аллинче Ленинпа Сталин кĕнекисене, Пушкин, Лермонтов, Толстой, Горький, Чехов произведенийĕсене курма тытăнатăн. Çыннăн пĕлĕвĕпе пĕрле сăнĕ те улшăнать. Вăл пурнăç çине хăюллăрах пăхкалакан пулать, пурнăçри ĕçсене тĕрĕс хаклама вĕренет.

Библиотекăна кашни кунах, вăтам шутпа, 550 çын пырса каять. Унта миçе тĕрлĕ професси çук пулĕ! Кашниннех вĕсен уйрăм интерес, уйрăм тĕллев, хăйсен юратнă авторĕсем пур. А. Павлов токарь малтанах летчиксен пурнăçĕпе интересленнĕ. Халĕ вăл вĕçекен машинăсен конструкцийĕсене вĕренме тăрăшать. Ф. Лаврентьев студент субтропикăри ўсен-тăрансемпе интересленет. Пурин кăмăлне те çырлахтарать библиотека.

Библиотекăна уйрăм çынсем кăна мар, учреждени е завод ячĕпе те нумай пыраççĕ. Пĕр çĕнĕ предприятире пысăк машинăсем вырнаçтарнă чух унти техниксемпе инженерсем хăйсене кирлĕ кĕнекесене библиотекăран илсе кайнă. Атăл леш енче ĕçлекен инженерсем те час-часах библиотекăри кĕнекесемпе усă кураççĕ.

Аякри районсенче пурăнакан вулакансем—агрономсем, колхозниксем, бригадирсемпе колхоз председателĕсем, учительсем, тухтăрсем—библиотекăран хăйсене кирлĕ кĕнекесене çыру урлă ыйтса илеççĕ. Ыйтнă кĕнекесем пулмасан, библиотека вĕсене Мускав, Ленинград, Хусан библиотекисенчен çырăнса илсе ярса парать.

Библиотекăн ĕçĕ питĕ те нумай енлĕ. Вăл республикăри библиотекăсене методикăлла пулăшу парать, выставкăсем, лекцисемпе докладсем туса ирттерет, литература вечерĕсем организацилет, тĕрлĕ темăпа рекомендациллĕ списоксем пичетлесе кăларать...

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ идеологи ыйтăвĕсем тăрăх кăларнă постановленисене шута илсе, библиотека пурнăçпа пĕр тан пыма тăрăшать. Ку ĕçре ăна, вулакансемпе пĕрлех, чăваш писателĕсен Союзĕ те, ытти организацисем те пулăшаççĕ.

---

## БИБЛИОГРАФИ ХЫПАРĔСЕМ

Библиографи тенĕ сăмах грексен biblion—кĕпеке, grapho—çыратăп, кĕнеке мĕнлине çырса кăтартатăп, кĕнеке çинчен çыратăп) сăмахсенчен пулнă. Библиографи тĕлĕшпе чăвашсенчен иртнĕ вăхăтсенче Н. В. Никольский профессăрпа филологи наукисен кандидачĕ В. Г. Егоров чылай ĕçленĕ. Никольский 1912 çулта кăларнă «Наиболее важные статистические сведения об инородцах Восточной России и Западной Сибири» ятлă кĕнекинче чăвашла тухнă 229 кĕнекене илсе кăтартнă. В. Г. Егоровăн 1931 çулта пичетленнĕ «Библиографический указатель литературы по чувашскому языку» кĕнекинче те чăваш çырулăхне тăвиччен тухнă хăш-пĕр чăвашла кĕнекесене кăтартса панă.

1932 çултанпа библиографи ĕçне пирĕн республикăра Чăваш АССР Кĕнеке палати туса пырать. 1949 çулта Кĕнеке палати 1939—1940 çулсемпе 1941—1945 çулсем хушшинче Чăваш республикинче тухнă кĕнекесемпе республика тулашĕнче тухнă чăвашла кĕнекесен литописне пичетлеттерсе кăларчĕ. Пĕрĕ кăларăмра пĕтĕмпе 1170 кĕнеке палăртнă. 1939—1940 çулсенчи кĕнеке летописĕн вĕçĕнче республикăра тухса тăнă хаçатсемпе журналсене тата республика тулашĕнчи чăвашла хаçатсене те тĕплĕн кăтартса панă.

«Кĕнеке летописĕ» кашни библиотекăра, вулав çурчĕсенче, научнăй работниксен аллинче пулмалла.

Хальхи вăхăтра Кĕнеке палатинче ĕçлекенсем 1917—1947 çулсем хушшинче пирĕн республикăра тухнă кĕнекесен, хаçатсен тата журналсен карточкисене хатĕрлеççĕ. Вăл летописсене çитес çул Мускавра Пĕтĕм Союзри Кĕнеке палати пичетлесе кăлармалла.

---